# Япăха ятран ятланă. Лайăха пуçран лăпканă

Паян эпир çынсем кĕнеке вулама пăрахса пынă тапхăрта пурăнатпăр та-ха, çавна пулах сăвăсен пуххисене питех те сахал кăларма пуçларĕç. Сăвăçсен йышĕ чаксах пырать, çырасса та вĕсем сахалтарах çырма тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ, чăваш поэзийĕн анинче тахçанах вăрлăх "акакан" Борис Борлен (Борис Леонтьевич Тихонов) ыттисенчен лайăх енĕпе уйрăлса тăрать. Иртнĕ çул вĕçĕнче тата кăçалхи хĕл пуçламăшĕнче харăсах унăн сăввисен виçĕ кĕнеки çапăнса тухрĕ. Иккĕшне – "Вирлĕ-виртлĕ сăвăсем" тата "Паянхи пулăм – курăм" текенскерсене "Новое время" издательство калăпласа кăларнă. Ачасем валли çырнă "Хаваслă паллашу" сăвăсен пуххине Чăваш кĕнеке издательстви хатĕрленĕ. Асăннă кĕнеке чăнахах та ачасемшĕн паха парне: авторсăр пуçне О.Федоров редакторпа О.Сергеева художник кĕнеке таса, илемлĕ, капăр пултăр тесе нумай тăрăшнă. Издательство кăçалах Борис Борленăн "Хурçă шанчăклă çынсем" кĕнекине кăларма палăртнă. Унта пĕр поэма, темиçе легенда тата сăвăсем кĕрессĕ.

Хальхинче сăмахăмăр пирĕн "Вирлĕ-виртлĕ сăвăсем" тата "Паянхи пулăм-курăм" кĕнекесем пирки пулĕ. Борис Леонтьевич, пурнăç тути - масине аванах тутанса курнă çын, тĕнче епле çаврăннине, этемпе этем мĕнле çыхăнура пулнине лайăх пĕлет. Çурхи илемлĕ каççем те, каччăпа хĕр хушшинчи пĕр вĕçĕмсĕр юрату та, çухалнă телей те ăна кăсăклантармаççĕ. Унăн лирики – гражданла лирика. Тĕпрен илсен унăн сăввисем – питлевлĕ-сивлевлĕ, çав вăхăтрах сиплевлĕ сăвăсем. Кама тиркет-ха поэт, камăн ĕçне-пуçне сивлет? Пуянлăха хапсăнса амăшне те сутса яма хатĕр этеме пĕтĕм чун-чĕрипе кураймасть вăл ("Пур пĕрех шалчи тулать"), халăхсен хушшинчи туслăх арканма пуçлани унăн ăшне çунтармаллипех çунтарать ("Халăхсем харкашнă вăхăтра"), иртсе пыракан пурнăçăмăрта ултав, суя, чунсăрлăх пуç çĕклени кăмăлне хуçать, çавă пулăмсене хирĕç хăюллăн кĕрешме чĕнет ("Сутăнмастăп сурăхла").

Çĕрме пуянпа чухăн-чахăн çын килĕштерме пултараймасть, непĕссĕрлĕх никĕсĕ çинче цивилизацие аталантарма май çукки, массăлла информаци хатĕрĕсем çыннăн намăссăрлăхне, ясарлăхне, пуçсăрлăхне мухтава кăларнин тискерле пĕлтерĕшĕ сăвăçшăн иккĕ çумне иккĕ хушсан тăваттă пулнă пекех паллă. Çавăн пек пулăмсене поэзи меслечĕпе усă курса татăклăн сивлет Борис Борлен:

"Этемлĕх, чыслăх манăçра,<br>Пĕри пĕрне тытса çиетпĕр,<br>Пĕр вичкĕн шухăш ман пуçра:<br>Эпир ăçта пырса çитетпĕр?

*("Пасартан... масара").*

Хăйсен тивĕçне маннă чиновниксемпе бюрократсене, пайта курассишĕн хыпса çунакан тӳре-шарана, йыт çӳппине ылтăн чăмакки ку тесе ярăнтарма хатĕр сутуççене, çавăн евĕрлĕ ытти йĕксĕке сатира çулăмĕ витĕр кăларса тасатасшăн поэт:

"Пĕр бюрократ теприннчен аслăрах,<br>Пĕр бюрократ теприннчен ăслăрах,<br>Пĕр бюрократ теприннчен чаплăрах,<br>Пурпĕр кашни каскăн, мĕскĕн, чăлах".

*("Пĕр бюрократ теприне...").*

Хальхи вăхăтра, обществăлла çĕнĕ строй йĕркеленсе-майланса çитеймен тапхăрта, инкексинкек айĕнче пăтранакан-пĕтĕрĕнекен çынсем те пайтах. Вĕсене шеллет, хĕрхенет автор, ун пеккисене патшалăхăн хăйĕн хӳттине илмелле тет. Патшалăх умĕнчи тивĕçе пурнăçланă чухне синкер лару-тăрăва лекнĕ çынсен шăпи пирки те калама манмасть Б.Борлен.

"Çĕршыв хушсассăн кĕтĕмĕр<br>Эпир Чернобыль аварне,<br>Унтан тухассăн пĕлтĕмĕр<br>Малашлăхра мĕн кĕтнине.

Вун саккăрта эп вăйлăччĕ,<br>Пачах пĕлмен чир-чĕр мĕнне,<br>Чернобыль ватрĕ, вăтăрчĕ<br>Чăваш каччин кунне-çулне".

*("Чернобыль паттăрĕн хӳхлевĕ").*

Чăваш халăхĕн хальхипе иртнĕ пурнăçĕ, унăн малашлăхĕ, культурипе искусствин ыранхи кунĕ канăçсăрлантарать Борис Борлена. Епле ан шухăшлаттартăр-ха тăван халăхăн шăпи? Çакăн çинчен çырни икĕ кĕнекинче те пайтах. Сăвăсен ячĕсемех вĕсенчи тĕп шухăша уçса параççĕ: "Чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет", "Паянхи сăвăç - юрăç", "Каласатпăр çĕнĕлле", "Яваплисем эпир пурте", "Хурланса хурласа сăвăлатăп". Япăха хурлать, виртлет, унран кулать Борлен. Сăвăсенче юмор вăйлă, сарказм, гротесклăх пысăк. Этеме пичĕ-куçĕ нĕрсĕр, кĕлетки-çурăмĕ кипетсĕр, утни-тăни вырнаçусăр пулнишĕн питлемест поэт. Ăна этемĕн ăшĕ-чикки хура, кăмăлĕ начар, йăли-йĕрки пӳтсĕр, чысĕ-совеçĕ таса мар пулни тарăхтарать, пăшăрхантарать. Çавăн пек çынсене "çылăхсăр" пурăнма вĕрентес дидактилла шухăш пачах та çук Борлен пуçĕнче. Çакна вăл хăйĕн сăввисенче поэзи меслечĕпе усă курса пурнăçланă.

Пурнăçра начарри те пур, лайăххи те сахал мар. Лайăххине асăрхаман сăвăç, сăвăç та мар. Борис Борлен пурнăçа пĕр енлĕ çеç курмасть. Вăл лайăххине асăрхама та пĕлет, пархатарлă çынсемпе малалла утма пулăшакан пулăмсем пирки хавхаланса çырать:

"Хĕвел ялкăшса тӳпене çул хывать,<br>Ирхи Атăла ылтăн-кĕмĕл сапать,<br>Тăван çĕршывра çĕнĕ кун пуçланать,<br>Управçă-анне хулана саламлать".

*("Управçă-анне").*

Е тата:

"Чăн чăваш яланах<br>Чăвашла вулать,<br>Çакăн пек маттур çынна<br>Хисеплес пулать.<br>Ма тесессĕн вăл манман<br>Хăйĕн чĕлхине,<br>Манкрута тухса кайман,<br>Çук, сутман чунне".

Борис Борленăн чĕлхи сăнарлă, сăвă хывас маçтăрлăхĕ пысăк. Хăйне евĕрлĕ, çав вăхăтрах чат хăйĕн. Апла пулин те Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Якковĕн традицийĕсене манса каймасăр ĕçлени те сисĕнсех тăрать. Аллă çул каярах Петĕр Хусанкай Борис Тихоновăн "Кĕсменсем тăкаççĕ кĕмĕл" сăвви çĕнĕлле янрани çинчен те çырнăччĕ. Унтанпа çур ĕмĕр ытла иртсе кайрĕ. Борис Борлен çамрăк мар ĕнтĕ, саккăрмĕш теçеткепе пырать. Сывлăхĕ çирĕпех мар пулин те ĕçлес тесех ĕçлет-ха. Ун алли витĕр çĕнĕ сăвăсем те шăранса тухĕç-ха, анчах та ватлăх çулсенче пысăк малашлăх пирки ĕмĕтленме йывăртарах. Сăвă çырас ăсталăха вăл иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсенчех алла илнĕ. Анчах та хăйĕнчен килнĕ тата хăйĕнчен килмен сăлтавсене пула унăн вăтăр çул тăван литературăран, тăван поэзирен таталса пурăнмалла пулса тухнă. Пушкăртстанра, унтан Хусанта хаçат-журналсенче ĕçленĕ. Çакна та асăнса хăварар. Борис Борлен Стерлитамак хулинче вăрах вăхăт хушши ĕçпе вĕрентӳ комбинатне йĕркелесе ярса, директор пулса ĕçленĕ. РФ халăха вĕрентес ĕç отличникĕн ятне тивĕçнĕ. Çав вăхăтрах интернат-шкулта чăваш ачисем валли педкурс, педучилищĕре чăваш ачисен уйрăмне йĕркелесе янă. Стерлитамакри пединститутра чăваш ачисен уйрăмне уçассишĕн те сахал мар вăй хунă. Пушкăртстанри чăваш çамрăкĕсене ятарлă ушкăнсенче вырăнтах экзаменсем тыттарса Шупашкарти пединститута ăсатнă. Хусанта, "Сăвар" хаçат редакторĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра педуниверситетра чăваш ачисен уйрăмне йĕркелесе янă, унтах лекцисем вулама та ĕлкĕрнĕ. Пенсие тухсан, Шупашкара куçса килсен, ватăлăх енне кайсан, тепĕр хут поэзи ытамне кĕрсе ӳкнĕ...

Б.Борлен шăпи республика тулашĕнче пурăнакан ытти сăвăç-юрăççен, çыравçăсен шăпипе те пĕрешкелех мар-ши? Тен, вăхăтра асăрхамастпăр, вăхăтра çул та памастпăр эпир вĕсене? Ку вара урăх тема.

Хальлĕхе эпир Борис Борленăн чуна тивекен сăввисемпе вулакана паллашма сĕнетпĕр.

**Геннадий УТКИН.**